30-288



С. ШĂПҪĂК

*

# ҪĔЛХЕСĔР ПЕТĔР

Хакĕ 12 пус.

Ҫăваш Кĕнеки Уйрăмĕ
Шупашкар 1930

Ç. ШĂПÇĂК

# ÇĔЛХЕСĔР ПЕТĔР

ХУТ САХАЛ ПĔЛЕКЕНСЕМ ВАÇÇИ

Çăваш Кĕнеки Уйрăмĕ
ШУПАШКАР—1930

Чебоксары, типография
Чувашгиза
Чувашлит № 781
Заказ № 2003
Тираж 10.000 экз.

# Ђĕлхесĕр Петĕр.

Улăм витнĕ хурал пӳрђĕ тулђĕ халăхпа. Ђĕлĕм тĕтĕмĕ йавăнаҭ пĕлĕтле. Ункăн-ункăн хитре пулса кашнин умне ҫывхараҭ. Ҫĕлен пекех йавкаланса лăнкăрт-лăнкăрт ҫăттараҭ.

— Ан туртăрха вăл усал тапака тархасшăн! — ĕсĕре-ĕсĕре тархаслаҭ Хумма.

— Е-е-ей, кумма, пĕрре вĕреннĕ йапалана ăҫтан пăрахăн, — тĕтĕмне Хумма ҫинелле йарса халаплаҭ Михала.

Пурте пуплеҫҫĕ. Кашни харпăрхăй ĕҫĕ ҫинђен калама тăрăшаҭ. Тепри ҫавăнтах суйеҫтерсе тыттараҭ.

— Нимĕнле ҫĕнмелле мар. Ҫăварне алла ђиксе йарса ђĕлхине тытсан тин парăнтартăм. Сылтăм алпала ђĕлхине тытса тăратăп. Сулахай алпала кăсйерен пекке туртса кăлартăм та, ҫурап та ҫурап хырăмĕнђен...

— Мĕн çинҫен суйса ларaй çав, Çтаппан?—ыйтрĕç катарарах ларакан пĕр икĕ-виçĕ çын.

—Çук, хам кашкăрпа вăрçни çинҫен каласа паратăп-таха,—терĕ Çтаппан.

— Ăçта вăрçнă вара есĕ апла?

— Çĕпĕрте, хронтран татăлса йулсан.

— Кашкăрпа аплах вăрçсан...

Тепĕр кĕтесре тепĕр ĕç çинҫен пуплеççĕ. Пĕрне пĕри хăлха тăратса итлеççĕ. Йумах пĕтнĕ çĕрелле ĕненнĕ пек пулаççĕ.

— Ма килмеççĕ? Халăх пухăннă, пуçлăх çук!

— Килтĕмĕрçке!—пырса кĕҫĕ йалсовет претçетаттĕлĕ пĕр çамрăкрах, паљтто тăхăннă, палламан çынпала.

— Районран килнĕши ку?..

— Страхховой акĕнт мар пулĕçке?—пăшăлтатса илҫĕç палламан çын çинҫен страхховкка тӳлеменнисем.

— Налок таттарма килнĕ пуҙ,— ăшри сасăпа каларĕ Куштан Кавĕрле ҫумри Лаврене.

Кам мĕнрен хăраҭ, ҫавăн ҫинҙен сӳтсе йаврĕҫ пĕр-пĕрин хушшинҙе палламан ҫын ҫинҙен.

—Ҫитĕннисене вĕрентекен килмелле терĕ, ҫавă мар пуҙ теха,—терĕ Петĕр сылтăм йенҙе ларакан Ларивана ывăҫ тупаӈ хӳттипе.

Ҙăннипех пĕлҙĕ Петĕр. Вĕсем пăшăлтатса ларнă вăхăтрах йалсовет претҫетаттĕлĕ палламан ҫын ҫинҙен каласа паҙĕ.

Ҫитĕннисене вĕрентекен уҙҙитлĕ пулаҭ ĕнтĕ ку пирĕн йалта. Ырантан пуҫласа хут вĕрентме тытăнас тет. Ҫавăнпа кĕҫĕр халăхпа калаҫса пăхас тет. Калаҫма сăмах паратăп ăна. Итлĕр. Хушамаҙĕ унăн Иванов пулаҭ. Товарищ Иванов, сире сăмах паратăп!

Ҙылайҙҙен калаҫрĕ Иванов йулташ. Тĕнҙери лару-тăру ҫинҙен, парт-

типе Совет влаçĕн политтĕкĕ çинҫен: налоксем çинҫен; страхховккă çинҫен; çавсемпе çыхăнтарса хутла пĕлменлĕх çинҫен те каласа хуҫĕ.

— Çивĕҫ калаçать. Маттур çын пулмалла. Çавăн пек çын кирлĕха пĕрре йала,—никама илтĕнмелле мар пуплесе лараççĕ виççĕн-тăваттăн кăмака сакки çинҫе.

Ликвитаттăр Иванов çынсем хăй çинҫен мĕн пупленине, мĕн шухăшланине пĕлмесĕрех шăратать токлата. Вăрахăнах вĕçне çитерсе «ыран килĕрен çӳресе хут пĕлменнисене шута илетпĕр» тесе пĕтерет токлатне.

* *
*

Йалсовет претçетаттĕлĕпе ликвитаттăр Иванов тепĕр кунне ирех тухрĕç йал тăрăх. Хут пĕлменнисене килĕрен çырса çӳреççĕ.

«Кăррриник!» турĕ Лариванӑн хапха сасси. Йăпăр-йăпăр пăхрĕ кил йенҫи кантăкран Ларивана. Йалсовет претçетаттĕлĕпе ликвитаттăр Ива-

нов ҫывхараҫҫӗ пӳртӳм патнелле. Хыпаланса поминани кӗнеки тытрӗ Ларивван.

— Пирӗ-ён киле-е-ес!

— Килӗрех. Тӗпелерех иртӗр. Атте вилнине ҫак кӗнеке ҫине ҫырмантаха, ҫырса хурас терӗмха аса илнӗ ђух. Ларӑр терӗ Ларивван поминани кӗнекине алӑра тытса тӑнипех.

— Есӗ ҫырма пӗлместӗнђђӗ вӗт, Ларивван!—терӗ йалсовет пуҫлӑхӗ Ларивван хут пӗлменнине астуса.

— Нушта вӗрентӗ. Салтакра вӗреннӗ епӗ.

— Пӗр кунђе, оклатной лист илнӗ ђух, алӑ пусмарӑнҫке есӗ, алӑ пусма пӗлместӗп,—терӗн.

— Алӑ шыҫнӑ вӑхӑтра пулнӑ ун ђухне.

— Хаљ пусса кӑтартха еппин...

— Алӑ шыҫнӑранпа ҫырайми пултӑм ҫав. Акӑ ҫакӑн пек пулса ларђӗ те,—аллине ђӑмӑртаса кӑтартрӗ Ларивван.

— Поминани кĕнеки çине мĕнле çыратăн тата?

— Унта сулахай алăпа та пыраť. Çак алли пăсăлнăранпа, сулахай аллипе çырма вĕрентĕм ĕнтĕ. Нушта теме те вĕрентĕ.

— Сулахай аллупа пусса пар еппин пире те,—терĕ ликвитаттăр Лариван суйеçтернине сиссе.

Йалсовет претçетатĕлĕпе Иванов пĕр-пĕрне куçран пăхса илђĕç. Тем каласрĕç пĕр-пĕрне куçпала. Лариван илеймерĕ ђухласа.

— Лариван, санăн ĕлĕк хăрах пӳрни питĕ те вăрăм тетђĕç. Хаљ те çавахи вăл? Ђăсса кăтартха аллуна,—терĕ йалсовет претçетаттĕлĕ.

— Ĕлĕк те çакăнтан вăрăм пулманăç-ке!—васкаса уçса пађĕ Лариван ђышкăлла ђăмăртанă аллине.

— Санăн аллу пăсăлман-ĕç!

— Пăсăлман та...—хĕремесленђĕ Лариван.

— Ыран каҫпала шкула вӗренме пыратӑн!

— Пымалла пуҫ ӗнтӗ...

Ҫырса ҫӳрекенсем Ларивак патӗнҫен тухса утрӗҫ урампа. Хут пӗлекенсене лайӑх пӗлет йалсовет претҫетаттӗлӗ. Вӗсене хӑвараҫҫӗ. Хут пӗлмен килсенҫен кӗмесӗр иртмеҫҫӗ.

„Ҫӑнкӑ-ӑрт!" турӗ Кӗҫтенкке калинккин саслункки.

— Арӑм, укҫа илсе тухса хатӗрле. Страхховой патне килҫӗҫ пуҫ. Ҫӗркаҫ ҫак токлат туса паҫӗ страхховккӑ ҫинҫен,—терӗ Кӗҫтенкке арӑмне кантӑк витӗр Иванов ҫине кӑтартса.

— Ӗнерех кайса памаллаҫҫӗ...

— Пирӗн киле-е-ес!—пырса кӗҫӗҫ хӑнасем.

— Килӗрех... Такҫанах хатӗрленӗҫҫӗ. Нийепле те леҫсе параймарӑм ара. Арӑм, тавайха укҫа хутаҫҫине,—вӗтеленсе ӳкрӗ Кӗҫтенкке.

— Укҫине те пар та. Ыран шкула

хут вёренме каймалла каҫпала. Миҫе ҫултаҫҫёха есё.

— Постой, постой, постой! Миҫереҫҫёха епё, карҫăк? Е-е-е, аҫам, хамах аса илтём. Хёрёх виҫҫё тултарса, хёрёх тăватта кайрăм ёнтё ҫак уйăхра.

— Суйатăн пуљ, Кёҫтенкке! Есё салтака та манран кайран кайнă. Манран та кёҫён есё. Епё те вăтăр виҫҫё ҫине тин кайнă хаљ—терё, Кёҫтенккене хирёҫлесе йалсовет претҫетаттёлё.

— Кам пёлет ара. Хут пёлместпёр.

— Ҫавăнпа та сан ёнтё ыран вёренме пымалла.

— Постой, постой, постой! Ара епё хут лайăх пёлетёп вёт! Салтакра вёреннё. Хаҫат та ҫырăнса илетёп пёрмайах. Хаљ... пуштă килеймерёха темле...

— Ҫак хаҫата вуласа парха еппин!—кăларса тыттарҫё Иванов Кёҫтенккене пёр хаҫат.

— Ара... Куç... Пайан... — нимĕн те тупса калаймарĕ Кĕçтенкке.

— Ыран каçпала пымалла вара шкула, ан ман! — тесе хăварђĕç йалсовет претçетаттĕлĕпе Иванов йулташ — Кĕçтенккене.

— Пымалла пуљ ĕнтĕ...

Аслă урама ту вĕçĕнђен пуçласа анат вĕçне çывхараççĕ йалсовет претçетаттĕлĕпе ликвитаттăр. Анђах, кашни хут пĕлменнийех, ликпунтăна пырасшăн мар, мĕнпе те пулин пăрăнса йулма тăрăшаť.

„Хам, хам, хам, хам!“ йатă вĕрсе йађĕ çырса çӳрекенсем Петĕрсен патне пырса кĕрсен.

— Ђасрах вырт! Çитрĕç! — терĕ Петĕре арăмĕ сарă кĕрĕкпе йусаса витсе.

— Пирĕн киле-е-ес! Ара Петĕр ма вырташ тата? Иртнĕ каç кăна халăх çине тухнăђђĕçке. Сывăмар мар пуљ? — Ыйтрĕ йалсовет претçетаттĕлĕ тĕлĕннĕ пек пулса.

— Сывмар çав, сывӑмар. Иртнӗ каç халӑх çине тухнӑӡӡӗ те. Мӗкӗте пӑйахампа Çерук ывӑлсем аран çӗклесе килсе пӑрахрӗç,—хыпаланса хуӡӗ Петӗр арӑмӗ.

— Хытӑ ӗçнӗ пуљ?

— Çук ӗççе мар! Харӑсах утса пыраттӑмӑрӡӡӗ тет. Айай, айай тесе иккӗ кӑшкӑрӡӗ тет те, çавӑнтах ӳкрӗ тет. Хӑй килеймерӗ. Йӑтса килсе пӑрахрӗç. Нимӗн те калаçмасӑ килнӗ ӡухнех. Ӡӗлхи çӗтнӗ. Пӗр сӑмах та калаçмасӑ.

Пайан ирех Çӗрпелне—пашалу Çтаппанӗ патне кайса килтӗм. Вӑл паллӑ йумӑç ӗнтӗ, лайӑх пӗлет. Çил хайарӗ ӳкнӗ терӗ. Вилет терӗ,—у-у-у! ӳлесе йаӡӗ Петӗр арӑмӗ питне саппанпа тытса.

Петӗр нимӗн хускалмасӑ, выртаӑ. Куçӗсене хупнӑ. Çӑварне карнӑ. Аптӑрарӗç сырма пынӑ хӑнасем. „Ӡӑнахахи тен"—пӑхса илӡӗç пӗрне пӗри. Анӡах, ӗненсех каймаççӗ пӗтӗмпех.

— Налок таварса памаллаҫҫӗ те сире,—терӗ йалсовет претҫетаттӗлӗ варахӑн, хуйхӑрса.

— Парса хӑварха епин. Хӑй вилсен те кирлӗ пулаӗ укҫа,—терӗ Пӗтӗр арӑмӗ куҫӗсене саппунсемпе шӑлса.

— Хӑйне анҫах пама йураӗ ҫав,—терӗ претҫетаттӗл Петӗр ахаҫ вырт-нине сиссе.

— Хамах пар, вӑл тӑраймасӗ.

— Ҫук пама пултараймастпӑр. Кайас пуҫ!..

—Петӗр, тӑрса илсе йулукҫа, налок таварӑнса килнӗ вӗт! Йӗрипен тӑрайатни?—терӗ Петӗр арӑмӗ Петӗре.

Петӗр аран-аран, арӑмӗ пулӑшнипе, ҫӗкленҫӗ вырӑн ҫинҫен. Претҫетаттӗл кӑларса тыттарҫӗ Петӗре 47 пус.

— Ма-ма-ма-ма-ма са-са-са-а-а-а-хал?—ыйтрӗ Петӗр претҫетаттӗлтен.

— Ҫавӑн ҫухлӗ кӑна таварнаӗ.

— Сă-сă-сă-ă-ă-ă-ă-паççипă! — терĕ Петĕр.

— Сана шкула çӳремелле мар турăмăр ĕнтĕ,—терĕ претçетаттĕл.

— Спаççипă, аҫам! Ҫунтан спаççипă! Арăм, сăра ăсса тухха. Пĕр виçĕ курка сăра ĕçтĕрсе йарар ырă çынсене!—терĕ Петĕр ĕлĕкхи пекех лайăх калаçса арăмне.

— Çук, сана ыран шкула пыма калама килтĕмĕр епĕр. Каçпала пымалла шкула. Ан ман. Сăра ĕçсе тăмастпăр,—терĕ ликвитаттăр.

— Пымала пуљ еппин,—тесе йулҫĕ Петĕр.

* *
*

Шкул тулли çитĕннĕ çынсем. Пурĕ вăтăр тăваттăн вĕсем. Вĕсем хушшинҫе: Лариван, Кĕçтенкке, Петĕр малти партти çинҫе лараççĕ.

— Мĕнле саспалли пулаŭ çак?— ыйтрĕ Петĕртен ликвитаттăр.

— Пĕлместĕп,—терĕ Петĕр.

— Вăт, вĕренес пулаť.

— Вĕренме килтĕмĕр теха!—терĕç малти парттă хушшинçе ларакансем виççĕн пĕр харăс.

---

# Мархва инке.

Мархва инке ытла ватă çынах мархата, анђах çулĕсем ђылай пулмалла. Вăл кађђа килнине епĕ лайăх астăватăп. Туйлах килсеђђĕ. Туйне епĕ те кайнăђђĕ. Анђах кам лашине утланса кайнине астумастăп. Мĕншĕн тесен, урамра ирĕк çӳрекен лашана тытса утланса кайнăђђĕ, лаша хамăрăн çукђђĕ. Хуçи курсан хăлхаран пĕтĕрессе пĕлсех утланса кайрăм, анђах вăл лаша хуçи пайан кун та ман хăлхасене тытаймасŏ. Мĕншĕн тесен лашине туйран тавăрăнсан урамах, паçăр хăй çӳренĕ вырăнах йанăђђĕ епĕ. Туйран тавăрăнсан мĕн тăвас унпа киле кĕртсе? Курманилтмен пĕр сăмах.

Мархва инкене урамĕпех питĕ йуратаđђĕç. Хаљ йалĕпех йуратаççĕ.

Ҫав тери илемлĕ, кăмăлла хĕрарăм вăл. Пирĕн муҫи хĕрарăмсене никама та йуратмасҫĕ:

— Каҫака—ыыҫăх мар, хĕрарăм—ҫын мар, каҫакапа хĕрарăм пĕр мур вĕсем, тесе йатлаҫаҫҫĕ вара йаланах килемейе те.

Анҫах Мархва инке пирĕн муҫин кăмăлне те кайнăҫҫĕ:

— Вăт Мархва кин, ма арăм тес мар ҫав, ҫавăн пек арăма. Утти-тăрри тăрă шыв пек, ури ҫĕре перĕнмест, арăм тăк-арăм,—теҫҫĕ вара йаланах Мархва инке хамăр умран иртсе кайнă ҫух.

— Ҫав Мархвана хамăн илмеллеҫҫĕ, ҫӳҫĕ те хамăр ҫӳрен лаша ҫилхи пекех,—теҫҫĕ вара пиҫҫе те Мархва инкене курнă хыҫҫăн.

Мархва инкене епĕ хам та йуратнă пек пулнă. Мана ун сасси питĕ кăмăла кайаҫҫĕ. Ун сассине епĕ ҫиркӳре илтеттĕм. Вăл ун ҫухне клирăса

йурлама кӗреҭҭӗ. Епӗ те кашни праҫникрех кайаттӑм ҭиркӗве. Пӗрре ҭиркӗве кайманшӑн тепӗр кунне парттӑ хушшинҭе кунӗпе ҭӗркуҫҫи ҫинҭе тӑрас килмӗ ӗнтӗ никамӑн та. Пӗрре тӑрса пӑхрӑм та епӗ, ҭӗркуҫҫи кӑркка мӑйӗ тӗслӗ пулҭӗ. Унтан кайран ирӗксӗрех ҫӳреттӗм вара.

Анҭах каҭҭа тухсан Мархва инке ҭиркӗве нумайах ҫӳреймерӗ. Унӑн сасси уҫӑран ҭеҭук ӑна пӗҭҭен йурламалли ҫӗрте йурлаттараҭҭӗ. Хорпа мӗкӗрнӗ ҫӗртенех хор тап ҭарӑнса, Мархва инке сасси пӗтӗм ҭиркӗве йантӑраратаҭҭӗ вара. Сассишӗнех епӗ ӑна пӗремӗк илсе ҫитересшӗнҭҭӗ. Анҭах ман ун ҭух укҫа пулман; укҫа мар сӑхман та пулман. Хӗл варринҭе ҫарамас ҫӳреттӗм.

— Ех, пирӗн инкен сасси,—терӗм пӗрре ҭиркӳре Ваҥука хӑлхинҭен пӑшӑлтатса.

— Вӑл сирӗн хурӑнташ мар, пирӗн инке,—терӗ Ваҥук хыттӑнах.

Нихăшин те пĕр-пĕринҫен парăнас килмест вĕт! Тытăнтăмăр тавлашма. Еҫ пĕтĕмпех ҫĕре кĕрсе карĕ: Ваҫук паҫĕ пĕрре мана айакран, епĕ ăна хăлха ҫиккинҫен. Вăл мана, епĕ ăна...

— Ай-ай, — тесе кăҫкăрса йатăм, уҫҫитлĕ хăлхаран пырса туртрĕ. Хытах ыраттарҫĕ.

— Ҫĕрик! турĕ клирĕс ҫинҫе Мархва инке сасси шăпах ҫаранса ларҫĕ. Ҫиркўрен тухиҫҫен те илтĕнмерĕ вара ун сасси. Мĕн пулнине пĕлесшĕн ҫиркўрен тухнă ҫухне алăк патĕнҫе Мархва инкене кĕтсе тăтăм. Анҫах ҫиркўрен пурте тухса пĕтиҫҫен те тухмарĕ те, кĕтсе тăмарăм.

— Шуйттан теҫукки, арăмăнне пайан ҫиркўрех сăмси тирне сĕвсе йанă. Киле кĕртместĕп вĕсене текех шуйттансене—тесе вăрҫаť пирĕн патăрта ҫав кунах Мархва инке упăшки.

Мархва инкен сасси ҫитеймен, уншăн теҫук ăна сăмсинҫен сасă илтермелли йуплĕ тимĕр татăкĕпе

шăлса антарнă. Мархва инкен сăмси çапла сĕвĕнсе кайнă пулнă. Хĕрлĕ сăмсапа халăх умне курăнма намăс тесех, вăл ђиркӳве пуринђен кайа йулнă. Кунтан кайран вара Мархва инке ђиркӳне те пăрахрĕ. Епĕ шкул-тан вĕренсе тухиђђен пăрахаймарăм, ђĕркуççи çинђе тăрас килместђĕ. Вĕренсе тухсан тепĕр праçникĕнђех епĕ те каймарăм, пăрахрăм.

Мархва инке ђиркĕве çӳремест пулсан та, ђиркӳ патĕнђен иртсе кайнă ђухне хăй çине хĕрес хурса иртсе кайађђĕ. Анђах ку та нума-йах пымарĕ, ђасах пăрахăç пулђĕ. Çураки çинђе ирхи апата кайма тух-нă. Ђиркӳ тĕлне çитсен апат ђĕрес-сине çĕре лартнă та хăй çине хĕрес хума тытăннă. Акана тухнă кун тесе ђылайрахах кĕлтăвасшăн пулнă пули, темле пулнă çав. Йакку пиђђесен ула сыснийĕ пынă та ђĕресе кăшт тĕксе пăхнă. Ђĕрес пăлтăрт йăванса кайнă. Кайран тем пулнă, пĕлместĕп.

— Латнă ёне пулнă, уйран пулман пулсан типĕ çăкăрах çитерес пулаҁҁĕ вара вăл старике, тесе асăнаҕ вара ăна йаланах Мархва инке хаљ те.

— Тепĕр старик пулсан, пушă тиveҁҁĕ çав ахаљ. Ёненместĕп епĕ турра. Турра кĕл тунипех старике кĕтех выçă хăвараттăм пĕрре. Çавăнпа та хĕрес хуман хам çине, тет вара хаљ Мархва инке.

Питĕ маттурҁҁĕ Мархва инке. Хаљ те маттур вăл. Упăшки салтака кайсан ака-суха тăвас тĕлĕшпе çынна тархасламан çав. Хăйех ĕçлеҁҁĕ, ăна тăваҁҁĕ, тырă акаҁҁĕ, капансем те хăйех тăваҁҁĕ. Пур ĕçре те пултараҁҁĕ. Çынсен арăмсем пек, упăшки патне çыру мĕн йарас тесен, çын кусĕнҁен пăхман. Хăйех çыраҁҁĕ. Çынсен арăмĕсене те çырса параҁҁĕ.

— Вĕренех Мархва, вĕренни сайа каймĕ, тесе калаҁҁĕ тет ăна ĕлĕк ашшĕ йаланах.

Ӗҫре маттур ҫын, пур ҫӗрте те маттурах ҫав вăл. Упăшки салтакра ђухне халăх ҫине ҫӳређђӗ тата Мархва инке. Ђăх ђӗри Ҫимйансем пек ђӗнмесӗр лармасђӗ тата, халăха вырăнаҫуллă сăмахсемпех калађђӗ.

— Мархва кин, сан шухăшупа мӗнле тумалла пек?—тесе ыйтађђӗҫ унтан халăх ҫинђе.

Мархва инке йаланах вырнаҫуллă тавăрса парађђӗ. Йуратађђӗҫ ăна халăх ҫинђе.

* *
*

— Мархва инке, айта хӗрарăм пуххине!

— Мӗнле хӗрарăм пуххи?

— Шкулта хӗрарăмсен пуххи пулаť пайан, вулăсран пӗр майра хӗрӗ килнӗ,—тесе хăварђӗ пӗрре шыв витрипе пыракан Мархва инкене шкула хăпаракан Анатвӗҫ Йевкен.

Мархва инкешыв витрисене лартрӗ те, тухса утрӗ Йевкен хыҫҫăн шкула. Ăна упăшки те нимӗн те ђармарӗ.

— Кайса кил ара, унђђен ађине хам та пăхăпха,—тесе çеç йулђĕ упăшки.

Çав кунтанпа вара Мархва инке тăватă çул ĕнтĕ телекаткăра ĕçлет. Йуратсах ĕçлет вăл хăй ĕçне. Упăшки те хĕпĕртет вара Мархва инкешĕн.

— Ман карђăк темĕнле ĕçлесе ситерет? Халăх çинђе те ĕçлет килти ĕçрен те йулмасть: пирĕн карђăкăн урайĕ Тарас арăмĕн сĕтелĕнђен таса, тет вара Мархва инкене упăшки ырласа.

— Халђ пĕђђĕккийех çук. Аптăрамастăп,—тет Мархва инке.

Иртнĕ çулта Мархва инке йалсовет ревиçи комиççин претçетаттĕлĕ пулнăђђĕ. „Кăçал претçетаттĕле çавна кĕртес йалсоветне“ тесе постановлени йышăнђĕç ĕнер ђухăнсен пуххинђе.

Маттур вăл Мархва инке.

## Аҫаллă арăм.

Килĕштерсех кайрĕ Анна каҫҫа. Хĕветĕр те килĕштерсех илҫĕ Аннана.

— Пирĕн пек пурнакан та пулмĕ.

— Епĕ пăрахăç хĕр мар.

— Епĕ те пăрахăç каҫҫă мар.

Ҫапла пĕрлешрĕç Хĕветĕрпе Анна. Питĕ те йуратаççĕ пĕрпĕрне. Ҫунаççĕ пĕрпĕриншĕн.

— Ытла та лайăх пурнаççĕçке çавсем,—тĕлĕнеҫҫĕç Хĕветĕрпе Аннаран Анна куç умĕнҫех.

—Упăшкана йурама пĕлес пулаť ăна!—мухтанаҫҫĕ Анна çынсене.

— Нухайкка вĕçĕ тивейменха сана!—çавăнтах выљатнă пек пулаҫҫĕ Хĕветĕр.

— Санран патак çийеппи?

— Ытах пит мĕн тата есĕ?

— Есĕ тата мĕн?

— Есĕ?

Шăкăртаттарса урамра выђатса калаçнă çĕртенех ђĕрре кĕрсе кайрĕç Хĕветĕрпе Анна. Çынсен куç умĕнђех пулђĕ ку вĕсен.

— Каплах пулсан, Хĕветĕр ывăлсемĕ пĕçертĕха кăна. — пăшăлтатса ђавсине тĕксе илђĕ пĕр сарă арăм хăй çумĕнђе тăракан хĕрсемне.

Урамран саланђĕç йĕркеллĕн. Сивђĕр сăмах пĕртте çук. Хăшĕ пĕђђен. Теприсем ыкшерĕн.

— Айта, старик!—терĕ Анна та.

Ирĕксĕррĕн тăрса утрĕ Хĕветĕр Анна хыçĕнђен килелле.

— Ырă каç пултăр!

— Лайăх çывăрăр!

— Çывăрса кайăр!

Ырă сунђĕç пĕрпĕрне саланнă вăхăтра. Хапха умĕнђи тенкелсем йулђĕç пушанса.

Каçхи нӯрĕ сывлăш уçлаŷ ђĕрене.

— Кукурек-ку-у!—ђĕтретет автан сывлăша.

Тусур патакки йантăрăт йалăн тепĕр вĕçĕнҫе. Катаран сасă тăват.

Унта та кунта йăтă сас тăват. Анҫах пымасть нумайа, кĕçех ҫарăнат. Лăпах. Урăх нимĕн сасă илтĕнмест.

—Итлеха, карҫăк! Мĕн çуйăхаççĕ? çывăрнă çĕртен вăратрĕ арăмне Ерхип.

—Ах, пушар пулмасан!.. сиксе тăҫĕ вырăн çинҫен Ерхип арăмĕ хăраса.

—Мар пулĕ те...— хăранă пек пулҫĕ Ерхип те.

—Çу-ук, Хĕветĕр ывăлсем... Темĕн çитмен ĕнтĕ ăна? Çывăрасҫĕ ăйăхне. Çĕнĕллех тытăннă тата,— каллех кĕрсе выртрĕ вырăнĕ çине Ерхип арăмĕ.

Пилĕкрен иртекен вăрăм, илемлĕ çивĕт кĕскелнĕ Аннан иртнĕ каç. Куç хупаххисем тăртаннă пĕтĕмпех. Тин çеç çĕре пуçланă улма пек курăнаççĕ пăхмашкăн. Ахаљ те пăртакхўлăмрах тута тăртаннă пĕтĕмпех. Куçхарши кăвак.—Сăнпуç салхуллă.

—Каларăм вĕт епĕ сана каçхине,— Анна çине тĕллесе кăтартрĕ иртнĕ каç хĕрсемне систернĕ арăм кĕтӳ хĕрринҫе хаҫхи хĕрсемне.

—Хĕветĕре йурама виçĕ пуçлă çын кирлĕ. Ку пуçламăшĕ анҫахха,—терĕ хĕрсем Аннана хĕрхенсе.

—У-у-у, вăл ывăлсеме йурасси,— терĕ арăмĕ те хĕрсемĕпе килĕшсе.

Çак кунран пуçласа пит куççем сывах çӳреймерĕç Аннан. Пĕрре сывалнă çĕре каллех çитсе ленкет Аннана.

„Упăшкана йăпатма пĕлес пулаť ăна“ тенĕ сăмахсем аса килеççĕ Аннана. Темĕн тĕрлĕ йурама тăрăшаť вăл Хĕветĕре. Анҫах ĕç тухмасť.

—Мăйна татса пăрахам!—хирĕçет Хĕветĕр. Ан та ҫĕн.

—Хĕветĕр, мĕн пулҫĕ сана, аҫам!— йăлăнаť Анна.

—Ан ҫĕн!..

Хĕветĕр улшуç. Хĕветĕр ĕçкĕç. Вĕçĕмсĕр ĕçет. Вĕçĕмсĕр вăрçаť.

— Атă хыв!

Хĕветĕр аттине хывма ларнă Анна сирпĕнет катана. Выртаť вăл ђĕнмесĕр антăхса.

— Мĕн тупрăн?мана пар!—мăшкăлаť Хĕветĕр çийелтен.

— Шыв ăсса пар!—тапăртатаť вырăн çинђе.

Шыв илсе параť Анна. Анђах, ĕçмест Хĕветĕр ăна. Выђаť шыв курки Анна çинђе. Утăнаť Анна питĕ те инçе.

Анна активискă шутланаť хĕрарăмсен хушшинђе. Вăл хут та пĕлет. Йалканашне суйланаť Анна совет сен суйлавĕнђе. Анна—йалканаш çекреттарĕ. Ĕçлет вăл ĕçе пикенсе. Анђах, кун памасť ăна упăшка.

— Кађђăсемпе аташма килсе ларатни кунта?!—çўçрен сĕтĕрсе тухса кайрĕ пĕрре кĕнђелертен Аннана Хĕветĕр. Кун хыççăн кăлармарĕ ниçта та, питĕрсех усрарĕ.

— Кĕсрене ҫĕртме хупрăмха!—мухтанаҫҫĕ ӳсĕрпе Хĕветĕр.

Аннан копператтив лапкинҫе ĕҫлемелле пулҫĕ. Лайăх ĕҫлет вăл кунта та. Пултарать ĕҫе. Анҫах, упăшка...

— Питĕр лапкуна!—пырса хĕстерҫĕ Аннана Хĕветĕр.

— Мĕншĕн,—тĕлĕнҫĕ Анна.

— Питĕр!

— Ҫук!

— Вăт, епĕ сана! Ак сана ҫук! Ак!—Аннана ҫивĕтренех тытса туха кайрĕ Хĕветĕр. Лапка йулҫĕ питĕрмесĕрех.

— Лапкана кайса питĕрем хăть, Хĕветĕр!— тархасларĕ Анна.

— Е-е-е, есĕ Петĕр патне-и? На, на! Петĕрпе есĕр ма хире-хирĕҫ пăхрăр, е?!

Копператтив правленин пуҫлăхне шанмасть Хĕветĕр. Анна пурăнать, тет ҫавăнпа.

Анна ывăнҫĕ патакран.

— Пурӑнмастӑп санпала, Хӗветӗр! терӗ пӗрре татӑклӑн.

— Ҫавах вӗлеретӗп!

— Тивеймӗн!

— Сана-и? Сана!—талхӑрса пыҫӗ Хӗветӗр.

— Ан кил!—ҫарҫӗ Анна.

Лаштах кайрӗ Хӗветӗр. Ҫарӑнҫӗ.

— Аҫалла арӑм! Ӑҫта кайӑн? Курӑпӑр!—йунарӗ йулашкинҫен нимӗн тума пӗлмесӗр Хӗветӗр.

— Вилмӗпӗр!—терӗ Анна.

Анна уйрӑм. Пӗрлешмест вӑл Хӗветӗрпе. Ҫунмасть вӑл уншӑн.

— Тахҫанах уйӑрӑлмалла пулнӑ. Усал арҫын патакне ҫисех ватӑлтӑм. Тахҫанах вӗренме тытӑнмаллаҫҫӗ,—тет Анна хаҫ ҫестрасен курсӗнҫе вӗренсе.

# Телей.

Лапђăнса ларнă авалхи кив пӳрт, çийĕсем пĕтнĕ çĕрсе йăкăлтах. Мађђи тăррине мăйансем пусçнă, çулсан пулĕђђĕ пĕр купа утă. Йе ăнсăртран кађака хăпарсан, тутă пулĕђђĕ çулталăк лăпах. Мăйансем çинђе çимĕçсем пулсан, хуçи те пуйăђђĕ ђăнах тахçанах.

Пĕртен пĕр ђӳређи урам йенелле, вăл та пулин хĕвелтен тӳнтерле. Хĕвел унта нихăçан та кĕмест, хăй çутине вăл ирĕксĕр сĕнмест. Ђӳређи айĕнђи пĕрени тухнă, çире пур арăм пек курăнса ларать. Çав ђӳређиннех хупни те усăннă, инвалит тесе калама йурать.

Пĕр сăмахпа каласан — пăхма та хăрушă, ăшне кĕрсе пăхсан — тӳсме çук ăшă. Çавăнпа та хуçи пĕртте хуйхăрмасть, йусасси çинђен шухăш та тытмасть.

Ҫак пӳртре ĕнтĕ Паљук пурăнаŷ. Ун патне халăх йалан пухăнаŷ. Кĕҫĕр те унта ларма ҫук вырăн, темĕн пуплеҫҫĕ, пĕлме ҫук ыррăн.

—Унта укҫа сайа йариђђен, кађака илем.

—Ухмах ес, Тарас, кађака мар, тен лаша илĕн.

—Выљђаса илсен.

Ахаљ суйаҫҫĕ, кам выљђаса илни пур пирĕн хушăра.

—Сайомне кам илни пур пирĕн хушăра, ҫавна каласа парха ес. Вара тин: кам выљђаса илни пур, те.

Ҫаксене илтсен ҫеҫ ăнласа илетĕн, мĕн синђен пуплеҫҫĕ—лайăх сисетĕн.

—Ҫук, ахаљ суйаҫҫĕ. Никама та тухмасŷ вăл.

—Тен мана хамах тухаŷ,—тет Паљук вăраххăн кулса.

—Туман ŷыханне пилĕкне ан хуҫ. Малтан сайомне ил те, унтан вара ĕмĕт хур.

—Ма, еп илнёç. Пĕркун Вăрнарта хăйар сутсан, йури кĕрсе илтĕм.

—Мĕнђул патăн?

—4 тенкĕ те 80 пус.

—Ех, суйа хутаççи. Вăл пилĕк тенкĕрен кайи çук вĕт.

—Еп илнĕ ђух 4 тенкĕ те 80 пус çеç тăнă. Еп малтанах илнĕ.

—Ну, çавах укçу шыва карĕçке, Паљук.

—Кайин-кайтăр, вăл прођђĕнĕпе те татаĭ хăй хакне. Срокĕ тухсан хăй хакпех йулашкине кайалла илеççĕ. Уншăн хăрамалли çук. Есĕр хăвăр Микулапа ĕçсе мĕн ђухлĕ пĕтертĕр ĕнер, вăл сайа каймари?—тет Паљук çилленнĕ пек пулса.

—Епĕр ĕçнĕ те, пирĕн хырăма кĕнĕ.

—Сирĕн ĕнер кĕнĕ те, пайан тухнă. Ман пайан та выртаĭ, пурха. Хăй хакне те çухатмасĭ, прођђăн та параĭ. Тен выљаса та илĕп,—Паљук каллех.

Нумайђђен пуплерёç. Вёçёмсёр тавлашрёç. Пёрпёрне темён те каласа пётерђёç. Парăнас шухăша нихăш те тытмасť, вăйлă вăкăр пек, ђакма шутламасť. Парăнтарма Паљук хаçат та вулаť, тёлли-паллипе тытса вăл параť:

—Акă, итле апăрша! Тон çинђи Ростовра пёр рапођђи 5.000 тенкё выљаса илнё.

—Тон çинђи Ростăвра çав, кунта мар.

—Кунта та пулё-ха,

* *
*

Кёрхи çил тискеррён—кашкăрла улаť. Урамра пăђ тёттём—нимён курăнмасť. Çавах та халăх татăксăр утаť. Кёрхи пылђăка ним вырăнне хумасť.

Йал çинђе ёçсем нумай пулмалла, çавăнпа халăх утаť хуралла. Паљук пўрђё те пушанса йулђё, ун вырăнне йал пўрђё кўпёнђё, тулђё.

—Кунта пирён 1927-мёш çулхи

10 прођђăнлă сайом илни çук пуљ? ыйтаŭ претçетатлĕ.

—Пурĕç, ма?.. тет Паљук.

—Кунта выљаса илнисен №-ĕсем пур та, çавăнпа ыйтрăм.

—Ман № пури пăх-ха, йумахлаŭ Паљук.

—Сан № манса йулнă, пĕри мăшкăлаŭ.

—Миçемĕш №-хе сан, Паљук пиђи?

—066.131-мĕш.

—016.127, 047 663, ак— 066.131. Çери минçе, 17-мĕш-и?

—Çапла пули...

—Сан № çине 250 тенкĕ тухнă, Паљук пиђи!

Пўрт тулли халăх шăпăртах пулђĕ. Паљук пиђи çеç йăли-йăл кулђĕ. Анђах, шанмасăр, хăй пырса пăхрĕ, хăй куçĕпе хăйех, шыраса тупрĕ: **№ 066.131. Серия № 17. Выигрыш в 250 р.**

Паљук пиђин ђĕри тапрĕ. Пўрт тума вăл укçа тупрĕ. Пĕр ăнсассăн

пурнăç ăнаҋ, кив пӳрт вырăнне çĕн пӳрт пулаҋ.

—Телей.

—Вăт, телей.

—Вăт, телей Паљук пиђин.

—Пĕђђен сурсан—типсе пыраҋ, мирпе сурсан—кӳлĕ пулаҋ. Пĕр пус укçа-тенкĕ тытаҋ, пĕр тенкĕ укçа пурнăç йусаҋ,—тет Паљук пиђи хĕпĕртесе.

—Манăн та илмеллеђђĕ кăна пĕлнĕ пулсан,—пăшăрханђĕ Вађухха старик.

—Хаљ те илме пулаҋ, шак хуђĕ претçетатлĕ.

—Хаљ ун пекки çук пуљ çав?

—Хаљхи хресђен сайомĕпе Интустриалисати сайомне тата та усăллăрах, тесе çыраççĕ „Канаш“ çинђе.

—Ăçта илме пулаҋ вĕсене?

—Кирек ăçта та илме пулаҋ: копператтивсенђе те, перекет кассинђе те. Ак еп хам Вăрнара кайатăп, хам та илсе килсе пама пултаратăп.

—Ман вађђи пĕрне илсе килха, Иван Ваҫҫилђ!

—Тавай уксуна.

—Ман вађђи те ил.

—Ман вађђи—иккĕ.

—Епĕр Петĕрпе пĕрре илетпĕр.

Укҫасем вĕҫеҫҫĕ сĕтел ҫинелле, хуҫисем кĕтеҫҫĕ пулас телейе.

## Ҫав пӗтерђӗ.

Ыран ыраш вырма каймалла. Лаша ҫук. Ҫемйе пысӑк. Темӗн тумалла Аптӑрарӗ Иван пайан.

—Ӗне сутсан—ӗнесӗр пурӑнкалӑ-пӑрши?—йумахлаҋ арӑмӗпе шӑматкун ирхине.

—Ара, ҫакӑ пурӑҫке—сӑпкари,—хурланнӑ пек пулђӗ Луккари.

—Ађасемпе ҫӳреме канҫӗр, тетӗп-ҫке вырмине те...

—Ҫапли... ҫаплах та вӑл. Пурӑн-калӑпӑри вара,—килӗшнӗ пек пулђӗ арӑмӗ Ивана:

Ђылайђђен ђӗнмерӗҫ Иванпа арӑмӗ пӗрпӗрне. Вӑрӑм шухӑша кайрӗҫ хӑйсен ӑшӗнђе.

—Анне, кӗтӳ хӑваҫҫӗ ҫынсем. Ху хӑватни, хам кайами? Ӗнине суни, анне?—ђупса пыђӗ амӑшӗ патне Ҫеркей.

Шăпăр-р-р йухса анҫĕ амăшĕ кусĕнҫен куҫҫуҫ.

—Анне, кусна çўпĕ кĕҫĕ-им? хĕрхеннĕ пек, тĕлĕнсе пăхрĕ амăшĕ çине Çеркей.

—Çук,—амăшĕн хурланнă, тăвăннă сасси илтĕнҫĕ Çеркейе.

—Ĕнине йарас мар пули еппин кĕтĕве, амăшĕ?—хăш хуйхăрса илҫĕ йăвăррăн Иван.

„Мĕн пулнă кăсене?“ шухăша кайнă пек пулҫĕ вунă çулхи Çеркей.

—Анне, ĕни ҫирленĕ-им пирĕн вара?—амăшĕ çине йăвашшăн пăхса ыйтрĕ Çеркей.

—Çук,—паçăрхи пек пĕр сăмах çеç пулҫĕ Çеркейе ответ.

—Ах, ку ăнман пурнăçа пĕрре...—тăвăннă пек каласа илҫĕ Иван кăмака умнелле пырса.

„Мĕн пулнă кăсене?“ тепĕр хут шухăша кайрĕ Çеркей. Хăвăрт тухрĕ тулалла. Утрĕ карта йеннелле.

—Ёнине сунӑ. Апат ҫиетӗн? Хупах татса парамха. Анҫах, нумай татас мар. Тен, ҫӑнах ҫирлӗ-и?—тухса утрӗ Ҫеркей пӗҫӗк вите пуҫӗпе пахҫана.

Ҫеркей пахҫаран хупах татса кӗнӗ ҫӗре, ашшӗ тытнӑ ёнене—тӑхӑнтараӑ йӗвене.

— Ма?—тӗлӗнсе шӑпӑртах пӑрахрӗ ёне ваҫҫи хупаха Ҫеркей.

— Пасара илсе кайас тетпӗр,—йӑвашшӑн, кӑмӑлсӑр, Ҫеркей ҫине пӑхмасӑр, каларӗ ашшӗ.

Ашшӗнҫен тӳнтерле ҫавӑрӑнҫӗ Ҫеркей. Йӗме тытӑнҫӗ сасӑпа.

—Лашапа улӑштарас тетпӗр, ывӑлӑм. Ан макӑр. Тырӑ вырма урапапа ҫӳрӗпӗр вара. Ҫитерме кайӑн тырӑсем пӗтерсен. Тек, ҫын лаши ҫине утланасшӑн ҫӳреттӗн... лӑплантарҫӗ ашшӗ ёнене хапха патнелле уттарса.

Амӑшӗ тухрӗ алӑри аҫапа пӳрт умне. Пӑхса илҫӗ куҫ айӗпе ёне

ҫинелле. Вăрт-варт анҫĕ ҫĕрелле. Ҫыхрĕ пӳрт умĕ алăкне ҫиппеле. Тепре пăхрĕ ашшĕ аллинҫи ĕнене. Шăлҫĕ куҫне тутăр вĕҫпе. Йусарĕ алăри аҫине.

— Ҫеркей,—Йаккусем тăрсан, уйранпа ҫăкăр тураса ҫийĕр есĕр!—кăмăллăн, аҫашланă пек сăмах хушрĕ кĕлет умнеле пыракан Ҫеркейе.

Ҫеркей йĕрет. Нимĕн те ҫĕнмест. Ҫунĕ хурланнă. Салхуллă. Йăвăрланнă.

—Атте,—макăрнă сасăпа хапхаран тухма тăнă ашшĕне ҫарҫĕ Ҫеркей.

— Пытăр еппин пасара, карҫăк?—ҫурма сасăпа сăмахласа илҫĕ ашшĕ хăйпе пĕрле хапхаран тухма тăнă амăшĕпе.

— Тăхăн еппин картусна. Айта, ут. Тен... ҫĕнҫĕ амăшĕ Ҫеркейе.

— Тен лаша утланса килмелле пулĕ,—кулнă пек пулса вĕҫлерĕ амăшĕ сăмахне ашшĕ.

— Айта, айта ҫасрах!

Ĕç умĕнхи пасартан пулас, питĕ те вăйлă пасар. Утма тăма çукхалăх.

Ĕне урамĕ. Питĕ те сахал ĕнесем. Виç-тăват ĕне тăраççĕ пĕтĕмпе. Вĕсене те пăхакан курăнмасть никам та.

— О-о-ой, Иван пиççей!—аллине, кăнтарнă катаран кăçкăрса пырать пĕр паллакан тутар.—Лайăхи, лайăхи? Мĕнле пурăнатпăр, Иван пиççей—çитсе алă тытрĕ Ивана.—О-о-о инке те килнĕ иккен!—Çеркей амăшне çавăрănса алă паҫĕ çав вăхăтрах. Ени çине пăхса илҫĕ сылтăм куçĕпе.

— Пурăнкалатпăртаха. Ĕне илçе тухрăмăрха,—хирĕç алă парса сăмахласа илҫĕ Иван та паллакан тутарпа.

— Килтĕмĕрха,—вăрахăн пĕр васкамасăр, аҫа йăтнă сылтăм аллине пушатса, алă тытрĕ Çеркей амăшĕ тутарпа.

Сăмахран сăмах. Халлапран халлап. Хĕрсех тытăнҫĕç калаçма тутарпа Иван.

—Илсе-илсе лайăхраххинех илесђĕ вăл лашана пĕрех хут,—сăмах хушшине кĕртсе хуђĕ Иван.

—Е-ей, ара, Иван пиççей! Епĕ кама нађар лашша пани пур?! Хĕт йамшăк ђуп. Хăт туйа кай. Хăт акка ту. Епĕ панă лашасем тытса кăна пыр. Хăвах пĕлеттĕн ĕнтĕ, Иван пиççей. Мĕн калаçмалли пур?.. Айте, кайсса пăхатпăр. Айте, айте!

—Амăшĕ, тăрха еппин есĕ.

—Вăл та пытă-ăр. Вăл та пытăр, Иван пиççей. Кунта аçça йулат, бет!—çине тăрса калаçрĕ тутар.

Лаша лайăх. Хитре. Кĕлетки илемлĕ. Хўрине татнă. Çилхине каснă.

—Анђах кастарнă ăна, Іван пиç-çей!—мухтат лашана тутар.

Ахаљ те илемлĕн курăнакан лаша, тутар сăмахĕсем хыççăн, пушшех те илемлĕ курăнат.

—Çакнах илесђĕ ашшĕ,—вăрттăн систерђĕ Ивана арăмĕ.

—Хакне килӗшеймӗпӗр!—тутар ҫине пăхрӗ Иван:

—Е-е-ей, Иван пиҫҫей! Хамăр ҫынран икӗ хак илес ҫук ӗнтте. Курман ҫын мар: пайтах санăн ҫăкăр-тăварна ҫинӗ, Иван пиҫҫей. Акă, инкке пăтă пӗҫернӗ маншăн темӗн ҭул. Турă ҫырлахах анҭах. Ҫирӗнтен хаклă илсен вара... Турă темӗн калӗ,—пӗр канăҫсăр калаҫаў тутар.

—Ваҫҫа!—ҫав вăхăтрах, ҭăввăшт тивретсе илет пушăпа лашана.

—Ҫакнах илесҭӗ, ашшӗ,—каллех ҫине тăраў арăмӗ Ивана.

—Айта, ӗнепе пуҫма пуҫ!— аллине ҫапаў тутара Иван.

—Ей, Иван пиҫҫей, ҭипер калаҫха есӗ. Алă тенкине нимӗн каламасăр хур ӗнттӗ уна.

Килӗшрӗҫ. Ҫирӗм тенкӗ ӗне ҫине памалла.

—Хуҭӗ пури вара?—лаша хуҭӗшӗн хăрана пек пулса ыйтрӗ Иван тутартан.

—Ей, Иван пиççей! Хутсăр лашапа çӳретпĕри вара епĕр?! На! Пошалстă! Вулаттар!

Тытрĕ лаша картăҫкине Иван. Анҫах, вулама пĕлмест.

Пăхрĕ арăмĕ çине—вулама пĕлмест. Пăхрĕ Çеркей çине—шкула кăйман. Никам та çук вулакан.

—Килелĕ мăнта!—ҫĕнсе илҫĕ йулташне тутар.

—Çаккă питте лайăх вулаŭ!—Кăтартрĕ йулташĕ çинелле Ивана. Куçне хĕсрĕ вăрттăн йулташне.

Тытăнҫĕ ҫĕннĕ йулташ вулама. Пĕрре хут çине пăхаŭ. Тепре лаши çине пăхаŭ. Ҫиперех вуларĕ: паллисем пур, тĕсĕ те çав.

* * *

Ыраш вырҫĕç. Сĕлĕ вырмалла. Çак кунсенҫех ыраш акмалла.

Питĕ те лайăх пулҫĕ лаша. Хĕпĕртенĕ Иван. Хĕпĕртенĕ çемйипех.

—Тавай пасара кайса килер пĕрре,

карҫӑк,—ӑшшӑн сӑмахласа илҫӗ Иван арӑмӗпе.

— Кайсан пыраҫҫӗ, ҫу та илмелле,—килӗшрӗ арӑмӗ.

Ӗҫ ҫи. Вӑйлах мар пасар. Шӗвӗ.

— Стой!—тӑратрӗ милитси Ивансене пасара ҫитсе кӗрсенех.

— Мӗн?—тӗлӗнҫӗ Иван.

— Хӑҫан илнӗ ку лашана?

— Пайан виҫӗ ерне,—ӑшӑрхаса кайрӗ Иван.

Арӑмӗ ҫӑтаймарӗ: макӑрҫӗ ҫавӑнтах.

— Камран илнӗ?

— Тутартан.

— Картӑҫкӑ?

— Пур.

Милитси илҫӗ хӑй аллине картӑҫка. Пур йенҫен тӗ лармасӳ вырӑна. Иванӑн лаша турӑ: картӑҫки ҫинҫе кӑвак. Ҫилхе сылтӑмра; кунта икӗ йенне.

— Вӑрланӑ лаша?!—милитси ҫӑрр пӑхрӗ Ивана.

— Ҫав пĕтерҫĕ. Ҫавах... Хутла пĕлменнийех пĕтерҫĕ. Калап: ун ҫухнех ултавлă вуларĕ. Ех, ку хут пĕлменни!

— Нта-а, лашуна илетпĕр, — лаша пусĕнҫен ҫавăртрĕ милитси.

Ларса макăрҫĕҫ Иванпа арăмĕ.

— Ех, ҫунăм! — пырса ҫуптурĕ лашана Иван.

— Пĕтрĕмĕ-ĕр! — ларнă ҫĕртенех йăванса кайрĕ арăмĕ.

— Айта! Кунран йултăр. Асăмра пултăр!.. — тарăхнипе шăл витĕр сăмахларĕ Иван

*
* *

— Хама та, арăма та ҫырăр. Вĕренмесен ҫупа-ҫупа вĕрентĕр. Ваҫук саккăрта, Ҫеркей вуннăра, Йакку 12 тултарат. Йеҫук 9 уйăхра. Пурне те ҫырăр. Пурте вĕренетпĕр. Саваларĕ мана ку хут пĕлменни, — йалсовет кăнҫелерне пырса ҫыртарҫĕ шăматкун каҫхинех Иван.

# ТУПМАЛЛИ.

*Стр.*

Ђĕлхесĕр Петĕр . . . . . . . . . . . . . 3
Мархва инке . . . . . . . . . . . . . 16
Ађаллă арăм . . . . . . . . . . . . . 24
Телей . . . . . . . . . . . . . . . . 31
Çав пĕгерђĕ . . . . . . . . . . . . . 38

Цена 12 коп.

С. Толмасов. НЕМОЙ ПЕТР

ЧувашГИЗ Чебоксары 1930 г.